Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – pchd21.ru
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой – www.rdub21.ru – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

**Автор: Александр Алексеевич Галкин**
**Книга: Çунатлă Улăп=Крылатый Улып**
**Сказка: Куянсен хӳри мĕншĕн кĕске?**

Ĕлĕк-авал пирĕн таврашра çеç мар, пур çертете сĕм вăрман кашласа ларнă, тет: вĕçе-хĕрри те курăнман, урлăш-пирлĕш те палăрман. Анчах вăрманĕ темĕнле аслă пулсан та, ытти чĕрчунсене пурăнма кунта çав тери хĕсĕк пулнă – арăслансем никама та çул паман. Уйрăмах куянсем хытă чĕтренĕ, пĕр-пĕр Арăслан сассине илтсенех килĕсене йĕм улăштарма вĕçтернĕ.
Пĕррехинче Куян Куянăч шикленсе-шикленсех сунара тухать. ăрăслансем тесе выçса вилмелле мар-çке-ха. Шăппăн пырать вăл сукмакпа, пĕр сас-хура кăлармасăр утать. Пырсан-пырсан Куян Куянăч сасартăк тăп! Чарăнать, пуçĕнчен тукмакпа çапнă пек кукленсе анать. »манн сулхăнинче сарăлса выртакан ăрăслан çине кăшт çеç пырса кĕмен иккен вăл!

Чылайччен ларать Куян Куянăч йывăç хыçĕнче ним хускалмасăр. Унтан çапах та хăюланать, тĕмĕ хыçĕнчен пуçне кăларса пăхать те тĕллĕннипе чылайччен куçне мăчлаттарса тăрать: лешĕ мĕнле выртнă çаплах выртать-мĕн, вырăнтан-мĕн, вырăнтан та хускалмасть. Унтан çапах та хăюланать, тĕмĕ хыçĕнчен пуçне кăларса пăхать те хускалмасть. «Мĕн пулнă ку мура?» – тесе, Куян Куянăч çывăхарах пырса пăхать. Лешĕ пурпĕр хускалмасть. Çакна кура Куян Куянăч Арăслан патне тата çывăхрах йăпшăнса пырать, патак илсе, ăна ури вĕçĕнчен хулен кăна тертсе пăхать. Арăслан хăнк та тумасть.

«Э-и-и, кăннă тем ку?» – шухăшлать Куян Куянăч хăйĕн кĕске ăсĕпе. Вăл Арăслан патне пырать те параппан тукмакки пек урипе ăна хырăмĕнчен панк! тутарать – лешĕ пурпĕр тапранмасть. Куян Куянăч вара хаваслансах каять, Арăслан хырăмĕ çине хăпарса тăрса, пĕтĕм вăрмана янăраттарма тытăнать:

Эх-хе-хе, юх-хо-хо-о-о
Килĕр, куянсем, кунта,
Чупăр, васкăр манн пата!
Курăр, сĕмсĕр тăшмана
Эп тӳнтертĕм ним те маар!
Ĕнте çитрĕ вăрмана
Ырă, ирĕк самана!
Выльăр, ташлăр, тусăмсем,
Юрлăр, кулăр, тăвансем!

Куян Куянăчăн сассине илтсен, пĕтĕм вăрмана чун кĕнĕ пек пулать. Куянсем пĕрин хыççăн тепри сасă патнелле йăпшăнаççĕ. Пăхаççĕ те шаках хытаççĕ. Куян Куянăч Арăслан çинче тăрать иккен!

– Ухмаха тухнă пуль ку? – пăшăлтатаççĕ вĕсем пĕрне-пĕри, Куян Куянăч çывăхне пыма хăраса. Анчах лешĕ çине тăрсах кăшкăрнине кура кусем ĕненеççĕ, майĕпенех ун тавра пухăнаççĕ. Арăсланĕ чăнах та вилĕши тесе, ăна унтан-кунтан тĕрткелесе пăхаççĕ. Вăл пачах та хускалманнине пула вĕсем те хăюланаççĕ, хăйсене усал тăшманран хăтарнăшăн Куян Куянăча мухтама тытăнаççĕ, пилĕк таран авăна-авăна пуç таяççĕ. Çакна курсан Куян Куянăч тата ытларах хăлаçланма, мухтанма тытăнать, йăлтти-ялтти сиккеленĕ май такмак калама пикенет:

Ĕнте пĕтрĕ
Сăнсăр,
Арăслан!
Тек тăраймĕ,
Хăратаймĕ
Нихăçан!
Пăрахатăп
Çемсере эп

Вут çине!
Вĕçтеретĕп
Çилпеле эп
Ун кĕлне!..

Анчах Куян Куянăч лайăххăн сиккелеме те ĕлкерейместь, сунарта çӳресе ывăннипе вилесле çывăрса кайнă. ăрăслан сасартăк вăранать те хăйĕн сăмси тĕлĕнче çапкаланса тăракан вăрăм хӳрене яп! ярса тытать, яваласа илсе, лайăх кăна пăрать. Çатăрт! тăвать хӳре. Куян Куянăч çари! çухăрса ярать те пĕррпĕррех тапса сикет. Арăслан аллинче вара хӳре çеç тăрса юлать.

Пĕр хушă вăрманта ура сассисем кăна илтĕнсе тăраççĕ, темĕнле вĕтĕ çар вутлă çумăртан тарать тейĕн…

Усăмсем! Хăвăр таврари куянсене курнă-и эсир?

Вĕсен те хӳрисем вăрăм маар вĕт? Мĕншĕн тетĕр-и? Мĕншĕн тесен вĕсем пурте хӳресĕр тăрса юлнă Куян Куянăчăн ачисем.

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.